**Истори страницисем тăрăх**

# Пĕрле туптанă Çĕнтерĕве

Нумай ĕмĕрсем хушшинчи мухтавлă историйĕнче вырăс халăхĕн хăйĕн наци чысне, ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварассишĕн сахал мар хирĕç тăрăва хутшăнма тивнĕ. Вĕсем яланах пĕр çын пек пулса Тăван çĕршыва хÿтĕлеме тăнă тата ют çĕршыв захватчикĕсене çĕнтернĕ.

Нихăçан тата нимĕнле тăшмана та вырăс çĕрне парăнтарма, халăхăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăх туйăмне хуçма май килмен. Вырăс халăхĕ историре улăп-халăх, ĕç çынни тата пултаруçă-халăх пулса тăрать.

62 çул çитрĕ Аслă Çĕнтерÿ пулнăранпа. Ку çĕнтерÿ чăннипех те пĕтĕм тĕнче историйĕшĕн пĕлтерĕшлĕ çĕнтерÿ.

Вăрçă пуçлансан пĕрремĕш кунран тытăнсах пĕтĕм халăх пĕр çын пек пулса тăшмана хирĕç Тăван çĕршыва сыхласа хăварма çăкленнĕ. Хĕрлĕ Çар салтакĕсемпе командирĕсем Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче чăннипех те паттăрлăх кăтартнă. Вăрçă хирĕнче вут-çулăмра, тылра вара хастар ĕçпе çынсем çĕнтерĕве туптанă.

Чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕсемпе хĕрĕсем тăшманпа малти ретре кĕрешнĕ. Вĕсем хушшинче пирĕн район çыннисем те. Паттăрсем чăннипех çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварма пĕтĕм халăх кĕрешĕвне пысăк тÿпе хывнă. Тăшманпа кĕрешме вăрçă хирне 9845 çын тухса кайнă, вĕсенчен 5044-шĕ каялла таврăнайман.

Фронтра хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнисем хушшинче орденсемпе медальсене тивĕçнисем сахал мар. Чи малтанах Г.А. Алексеев, Я.А. Анисимов, Б.М. Васильев, А.И. Воробьев, И.Г. Мешаков ячĕсене асăнмалла. Вĕсем çĕршывăн чи пысăк наградисене – Совет Союзĕн Геройĕн ячĕсене тивĕçнĕ. А.А. Быков вара Мухтав орденĕн тулли кавалерĕ пулса тăнă.

Вату çынсемпе хĕрарăмсем, артельсен членĕсем, шкул ачисем тылра хастар ĕçпе çĕнтерÿ кунне çывхартнă. Вĕсем те тăшмана çапса аркатма хăйсен тÿпине хывнă.

Çамрăксене патриотизмла воспитани парас тĕллевпе тата совет салтакĕсен вăрçă çулĕсенчи паттăрлăхне халалласа «Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнчи муниципаллă архив» муниципаллă учреждени «Вĕсем Тăван çĕршывăн чысне, ирĕклĕхне тата никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварнă» ятпа документсен выставкине йĕркелерĕ. Кунпа пĕрлех «Хисеплĕ ветерансем, пуç таятпăр сирĕн умра» стенд валли материалсем пухса хатĕрлерĕмĕр.

Кунпа пĕрлех Муркашри историпе краеведени музейĕ валли материалсем сахал мар пуçтартăмăр: çырусемпе аса илÿсем, вăрçă участникĕсемпе вĕсен наградисем пирки сведенисем, уй-хирте ĕçлени, фронта пулăшни, Хĕрлĕ Çар валли, «Чăваш колхозникĕ», «Чăваш тракторисчĕ» танк колоннисем валли тата çар самолечĕсем тума укçа-тенкĕ пухни пирки хаçат материалĕсем т. ыт. те. Сăмахран, Чемейри «Революци сыхлавçи» колхоз ĕçченĕсем хăйсен ентешĕ Совет Союзĕн Геройĕ Борис Васильев летчик-истребитель валли çар самолечĕ туянма 100 пин тенкĕ пухса панă. 1942 çулхи декабрĕн 29-мĕшĕнче районти ĕç çыннисем Сталинăн саламлă телеграмми çине хуравласа «Чăваш колхозникĕ» танк колоннине йĕркелеме 91440 тенкĕ хывнă. Кăпас ял Советĕнчи «Заря» колхозра фронт валли 20 пин тенкĕ пухнă, «Гигант» колхоз председателĕ Я.П. Бабушкин 25 пин тенкĕ пуçтарса панă. 1943 çулхи январĕн 11-мĕшĕ тĕлне «Чăваш колхозникĕ» танк колоннине йĕркелеме пĕтĕмпе 1547000 тенкĕ, «Чăваш тракторисчĕ» танк колонни валли 88000 тенкĕ пухăннă.

Çапла вара тăшмана çапса аркатасси, Тăван çĕршыва хÿтĕлесе хăварасси чăннипех те пĕтĕм халăх ĕçĕ пулса тăнă. Никам та çак пархатарлă тивĕçрен аякра тăрса юлман. Çавăнпа çĕнтерме пултарнă та тăшмана.

**Л. НИКОЛАЕВА,**
**район архивĕн заведующийĕ.**

**Редакци почтинчен**

# Ветерансене чысларăмăр

Çу уйăхĕн 8-мĕшĕнче Шуркассинчи пуçламăш шкулта вĕренекенсем вăрçă ветеранĕсене чысларĕç. Кашни çулах вĕсем шкула е клуба утса çитме вăй-хал çитереймен ветерансем патне çул тытаççĕ. Унта вĕсем хăйсен аллисемпе ăсталанă парнесем параççĕ, хăйсен çитĕнĕвĕсем, шкул пурнăçĕ çинчен каласа параççĕ.

Кăçал та пирĕн класс ачисем хамăрăн класс ертÿçипе Р.И. Ивановапа пĕрле В.И. Иванов тата В.И. Смоленцев ветерансем патĕнче пулчĕç, хăйсем ăсталанă саламлă открыткăсем тата пĕрер чÿлмек пÿртре çитĕнекен илемлĕ чечексем парнелерĕç, хыççăн салтаксем çинчен сăвăсем вуларĕç, юрăсем юрласа пачĕç. Ветерансем питĕ савăнчĕç. «Дороги» юрăна вара вĕсем ачасемпе пĕрле хăйсем те юрларĕç.

Ачасен саламĕ хыççăн ветерансем ачасене çавра сĕтел хушшине чей ĕçме чĕнчĕç, тутлă пĕремĕксемпе тата канфетсемпе хăналарĕç, вăрçă вăхăтĕнчи йывăр кунсене, хаваслă самантсене аса илчĕç.

Эпир вĕсем патĕнче пулнăшăн ветерансем кăмăллă юлчĕç, пире ырлăх-сывлăх, лайăх паллăсемпе ĕлкĕрсе пыма сунчĕç.

**К. АНДРИАНОВА, О. ИВАНОВА,**
**В. ЕГОРОВА, В. АНТОНОВА,**
**А. МИХАЙЛОВ,**
**Шуркассинчи пуçламăш шкулта вĕренекенсем.**

## Саламлатпăр



Купăрля ялĕнче пурăнакан **Альбина Петровна НИКОЛАЕВА** çак кунсенче хăйĕн 60 çулхи юбилейне паллă тăвать. Çав ятпа эпир ăна чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, ăнăçу, вăрăм ĕмĕр сунатпăр.

Кĕркунне пек тулăх пултăр ĕмĕрÿ,
Чир мĕнне пачах ан пĕлтĕр сывлăху,
Тату пултăр ĕмĕр пурнăçу,
Такăр пултăр яланах çулу.
Тав сана пуриншĕн те чунтан,
Эсĕ хаклă кĕмĕл-ылтăнран,
Эс пурри пире савăнтарать,
Пурăнма ялан вăй-хал парать.

**Саламлаканĕсем: юратнă мăшăрĕ, ывăлĕсем, кинĕсем, мăнукĕсем.**



Юратнă та хисеплĕ мăшăра, аттене, асаттене – Исетерккĕ ялĕнче пурăнакан **Николай Андреевич АНДРЕЕВА** 70 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Сана çак паллă кун ячĕпе саламласа пурнăçра мĕн пур ыррине кăна, нумай-нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх, телей, иксĕлми вăй-хал сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрÿшĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕ тата çывăх тăванĕсем.**

**Пĕтĕм тĕнчери çемье кунĕ умĕн**

# Йăлтах çемьерен пуçланать

***Çемье. Мĕн тери пысăк пĕлтерĕшлĕ сăмах вăл. Малтанхи утăмсем, пирвайхи савăнăç, малтанхи кÿренÿ, тăван кил ăшши, аттепе аннен юратăвĕ – йăлтах-йăлтах çемьерен пуçланать. Çулсем иртнĕçемĕн ачалăхра илнĕ воспитани пирĕн пурнăç çулне уçса пырать. Мĕн тери хаклă иккен çемье кашни çыннăн пурнăçĕнче.***

***Мĕнлерех пурăнаççĕ паян районти çемьесем? Мĕн калама пулать вĕсем пирки? Çак тата ытти ыйтусем çине хуравлама ыйтрăм та ĕнтĕ эпĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕнчен – культурăпа архив ĕçĕсен пайĕн ертÿçинчен А. Е. Андрееваран. Майăн 15-мĕшĕнче паллă тăвакан Пĕтĕм тĕнчери çемье кунĕ умĕн хамăр пурнăç, хамăр çемьесем çине тепĕр хут çаврăнса пăхни шăпах вырăнлă пулĕ.***

**– Алевтина Евстафьевна, чи малтанах районти çемьесене пĕтĕмĕшле хак пани вырăнлă пек туйăнать.**

– Пĕтĕмпе районта 4312 çемьере 7122 ача çитĕнет. Вĕсенчен 487-шĕ – нумай ачаллă çемьесем. Вĕсенче 1584 ача. Çак цифрăсене асăнни те кăсăклă пулмалла. 396 çемьере паян 3-шер ача çитĕнет. Пĕтĕмпе вĕсенче – 1188 ача. 4 ачаллă çемьесем районта 66 (вĕсенче 264 ача). 5 ачаллă çемьесем – 21 çемье (105 ача). Чылай маларахри çулсенче 6-7 ачаллă çемьесем сахал мар пулнă пулсан, паян вара районта 6 ачаллă çемье пĕрре, 7 ачалли иккĕ кăна.

Паллах, тулли, телейлĕ çемьере кăна ача пур енлĕ воспитани илсе ÿсме пултарать. Шел пулин те, тулли мар çемьесен йышĕ те районта тĕрлĕ сăлтавсене пула сахалах мар – 788. Вĕсенче 1133 ача ашшĕн е амăшĕн юратăвне туяймасть. Çав шутран ачисене пĕччен çитĕнтерекен çемьесем 345 (437 ача), мăшăрĕсенчен уйрăлнă ача амăшĕсем 168-ăн (241 ача), уйрăлнă ашшĕсем 3 (6 ача). Çавăн пекех 239 хĕрарăм мăшăрĕсем çĕре кĕнине пула 371 ачана пĕчченех çитĕнтерет. Çак сăлтавпах 33 арçын 78 ачана хăйсемех воспитани парса ÿстерет.

**– Ашшĕ-амăшĕ хăйĕн ачишĕн чунне пама хатĕррине хăй ашшĕ е амăш пулнă кашни çынах лайăх ăнланать. Паян хăйсен ачисенчен уйăрмасăр тăван ашшĕ-амăшĕсĕр юлнă ачасене юратса çитĕнтерекен çемьесене уйрăмах ырăпа асăнса хăварас килет. Вĕсем çинче чарăнса тăмасăр та май çук.**

– Шăпа, шел пулин те, пурин те пĕр пек телейлĕ килмест. Районта пурăнакан çемьесем юнашарта пурăнакансен хуйхи-суйхине чĕре патне илсе пулăшни вара савăнтарать. Ун пеккисем пирĕн, телее, çителĕклех. Паян пĕтĕмпе районти 82 ачана 61 опекун тăван ашшĕ-амăшĕн юратăвĕпе çемье ăшшине парать. Тем пысăкăш тав 29 ачана усрава илнĕ 26 çемьене. Кунсăр пусне районти тепĕр икĕ çемье 2 ачана çемьене пурăнма илчĕ. Çакнашкал çемьесем районта татах та йышланасса шанас килет. Ахальтен каламан вĕт ваттисем чун пулсан, чул хушшинче те усрăпăр, тесе.

Çынсен ыр кăмăлĕ вĕçĕхĕррисĕр пулнине кăçалхи "Ачалăх ячĕпе, йăлтах ачалăхшăн" марафон та çирĕплетсе пачĕ. Ун вăхăтĕнче 94 пин те 325 тенкĕ укçа пуçтарăнчĕ ятарласа уçнă счет çине. Вĕсенчен 25 пин тенкине Чăваш Енти Ача-пăча фондне куçарса панă.

**– Çемье, ачасем район администрацийĕшĕн те, Çĕршыв Правительствишĕн те чи малти вырăнта.**

– Урăхла пулма та пултараймасть. Кăçал çулталăк пуçланнăранпа кăна районти 105 çемьене çитсе вĕсенчи лару-тăрăва тĕпченĕ. Çакăн хыççăн 20 çемьене ЧР Сывлăх сыхлавĕ тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти уйрăмĕнчи "Халăха социаллă пулăшу паракан центр" урлă ача япалисене парса пулăшнă. Паян районти пур ача-пăча учрежденийĕнче те ачасене тĕрлĕ енлĕ вĕрентÿпе воспитани илме майсем пур.

Паян çĕршыв Правительстви ачасен ачалăхĕ телейлĕ, пуласлăхĕ анлă та çутă пултăр тесе питĕ нумай тăрăшать. Астăватăр пулĕ, иртнĕ çулта РФ Патшалăх Думине янă Çырура РФ Президенчĕ В. В. Путин ача пур çемьесене паракан çăмăллăхсем ÿсесси пирки каланăччĕ. Çулталăк вĕçĕнчех декабрĕн 22-мĕшĕнче "Ача пур çемьесене патшалăх пулăшăвне памалли хушма мерăсем çинчен" 256-мĕш номерлĕ Постановлени тухрĕ. Çапла майпа кăçал январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласах çак çăмăллăха туйса илчĕç ĕнтĕ ача пур çемьесем: ачашăн паракан пур пособи висем те ÿсрĕç. Амăшĕн капиталĕ те сăмах çеç маррине, чăнчăн пулăшу иккенне паян районти 23 çемье туйса илчĕ ĕнтĕ. Патшалăх паракан çак пулăшăва илмелли çемьесем паянхи куна 68-ăн. Вĕсенчен 34-шĕ амăшĕн капиталне пама ыйтса заявлени çырса панă.

Çĕршыв хăйĕнчен килнине йăлтах тăвать паян çемьесенче ачасем тулли телейлĕ пурнăçпа ÿсчĕр тесе. ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров ЧР Патшалăх Канашне янă Çырура та çемье ыйтăвне мала хурать.

Çакна вара пирĕнтен кашниех лайăх пĕлет: укçапа çеç телейлĕ пулаймăн. Ачана çемье кирлĕ, ашшĕ-амăшĕн юратăвĕпе ăшши. Чуна йывăр чухне те, савăнăçа та килте тăван çынсемпе пайланине мĕн çиттĕр? Районти 125 ăнăççăр çемьере çакна ăнланасса шанас килет. Вĕсенчи 277 ача паян çĕр çинчи чи çывăх çынсен ăшшине çителĕклĕ таран илеççĕ тесе калама çук-ха. "Тырă пулмасан – пĕр çул хуйхă, ывăл-хĕр ăнмасан – ĕмĕрлĕх хуйхă", - тенĕ ватăсем. Асра тытасчĕ çакна.

**– Тăван ялта çемье кĕтнипе ĕнтĕ Аслă Отечественнăй вăрçăра та пирĕн аттесемпе асаттесем çĕнтерчĕç.**

– Çăмăл пулман вăл çулсенче никама та. Мăшăрĕсене, ывăлĕ-хĕрĕсене вăрçă хирне ăсатнă амăшĕсем тылра çĕнтерĕве çывхартма пулăшрĕç. Исетерккĕри 8 ача амăшĕ Т.Н. Николаева пĕтĕм амăшĕн сăнарне пĕрлештерсе тăрать тесен те ытлашши пулас çук.8 ывăлтан 4-шне çеç кĕтсе илчĕ вăл. Асли Алексей Совет Союзĕн Геройĕ, тепĕр ывăлĕ Егор А. Матросов пек тăшман амбразурине хăй кăкăрĕпе хупланă. Çĕре çити пуç таятпăр эпир çакăн пек амăшĕсем умĕнче.

Паян та пирĕн районти çемьесем ывăл-хĕрĕсене тĕрĕс воспитани парса çитĕнтерес тесе тăрăшнипе пĕрлех тăван район аталанăвĕшĕн ырми-канми вăй хураççĕ. Тавах вĕсене çакăншăн.

**– Ĕç династийĕсемпе те мухтанма пултаратпăр эпир. Çапла мар-и?**

– Ĕç династийĕсене чысласси пирĕн районта та, республикăра та ырă йăлана кĕчĕ. Юлашки 6 çулта кашни çулах районти "Акатуйра" чи лайăх ĕç династийĕсене палăртатпăр. Унччен кăшт маларах вара республикăра иртекен ĕç династийĕсен слетне те пирĕн ентешсем хаваспах хутшăнаççĕ. Кăçал пирĕн район чысне ку тĕлĕшпе Отарккăри Васильевсен çемйи хÿтĕлерĕ республикăра. Ял хуçалăхĕнчи пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ вĕсен – 314 çул. Васильевсен 5 ывăлĕ те Чапаев ячĕллĕ хуçалăхра водитель пулса ĕçлеççĕ. Династи пуçлăхĕ вара С. В. Васильев 45 çул ĕçленĕ шоферта. Паян вĕсен ырă йăлине Васильевсен 2 мăнукĕ малалла тăсаççĕ.

Пĕтĕмпе вара районта ĕç династийĕсем 87. Çав шутран ял хуçалăхĕнче 54 династи. Кунта Кашмашри Алжировсен (318 çул), Исетерккĕри Никитинсен (302 çул), Анаткассинчи Григорьевсен (141 çул) çемье династийĕсене ырăпа асăнмасăр иртме çук.



***Сăн ÿкерчĕкре эсир Галина Николаевнăпа Николай Поликарпович Александровсене тата вĕсен ывăлне Дмитрие куратăр. Николай Поликарпович Шетмĕпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕнче вăй хурать, Галина Николаевна вара Шетмĕпуç шкулĕнче поварта тăрăшать. Дмитрий иккĕмĕш класа кăна çÿрет-ха. Çемьере тепĕр хĕр те ÿсет. Ирина 4-мĕш класа çÿрет.***

***Александровсем сывă пурнăç йĕркине тытса пыраççĕ, спортпа туслă. Çак сăн ÿкерчĕке шăпах ĕнтĕ районти «Атте, анне тата эпĕ – спортпа туслă çемье» ăмăртура тунă.***

Вĕрентÿпе культура ĕçĕнче вара 26 çемье династийĕ. Йÿçкассинчи Герасимовсен (309 çул), Чемейри Расторгуевсен (450 çул), Кăпасри Ягуновсен (81 çул) çемье династийĕсене палăртмалла.

Суту-илÿпе промышленноçра Мăн Сĕнтĕр райповĕнче ĕçлекен Якутовсен династийĕ пирки каламалла.

**– Калаçу пуçламăшĕнченех халĕ нумай ачаллă çемьесем сахалланса пыни курăнчĕ. Паян нумай ачаллă хăш çемьесемпе мухтанма пултарать районăмăр?**

– Чи малтанах ман Кĕртекассинчи Татьяна Павловнăпа Петр Васильевич Васильевсене палăртас килет. 60 çул пĕрле утать çак мăшăр пурнăç çулĕпе. Ĕмĕр тăршшĕпех тăван хуçалăхра вăй хучĕç. Вĕсем 7 ача çуратса пурнăç çулĕ çине кăларчĕç, ĕç пурнăç тыткăчи пулнине хăйсен ырă тĕслĕхĕпе çирĕплетрĕç.

Паян 7 ача çитĕнтерекен çемьесене те ятранах асăнас килет. Сăмах кунта Юнкăпуçĕнчи Людмила Николаевнăпа Сергей Михайлович Апроськинсен çемйи пирки пырать. Мăшăрсем иккĕшĕ те "Сеспель" чикĕллĕ яваплăхлă обществăра вăй хураççĕ. Аслă ывăлĕ 18 çулта вĕсен, кĕçĕн хĕрĕ 4 çулта.

Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Иштерекри Нина Геннадьевнăпа Юрий Игнатьевич Яковлевсем те районти ытти çемьесемшĕн ырă тĕслĕх. Ача ашшĕ "Акимов" уйрăм предпринимательпатĕнче, мăшăрĕ "Лидер" АФ сыснасем пăхнă çĕрте ĕçлеççĕ. 7 ачине те вĕсем пĕчĕккĕллех ĕçе хăнăхтарса ÿстереççĕ. Паян аслисем кĕçĕннисене куçран вĕçертмеççĕ. Ашшĕпе амăшĕ ĕçрен киличчен килти ĕçе пуçтараççĕ, пĕр-пĕрне пулăшаççĕ.

**– Çемьере тĕрĕс воспитани илнĕ ачасем кайран ашшĕ-амăш чысне çÿле çĕклеççĕ.**

– Ку чăнах та çаплах иккенне районти чылай çемьепе çирĕплетсе пама пулать. Аслă вăрçăра Совет Союзĕн Геройĕ пулса тăнă Г.А. Алексеевпа, Я. А. Анисимовпа, Б. М. Васильевпа, А. И. Воробьевпа, И. Г. Мешаковпа, Мухтав орденĕн тулли кавалерĕпе А. А. Быковпа эпир чăннипех те мухтанатпăр. Катăкуйĕнчи Е. Борисов, Кашмашри Н. Смирнов (вилнĕ хыççăн) Раççей Геройĕсемпе эпир паян мăнаçланатпăр. Барселонăри Олимп чемпионки В. Егорова та Муркаш ятне чикĕ леш енче пĕлмелле турĕ. Паян çакăн пек çитĕнĕве спортра В. Соколова, Т. Моисеева тата ыттисем тăваççĕ.

Халăхра çапла калаççĕ: "Улми йывăççинчен аякка ÿкмест". Ку ĕнтĕ, урăхла каласан, йĕркеллĕ çемьере йĕркеллĕ ача çитĕнет тенине пĕлтерет. Çакă кашни ашшĕ-амăшне хăйĕн ывăл-хĕрĕсене хăйсен ырă тĕслĕхĕсене тĕпе хурса ÿстермелли çинчен аса илтерет. Апла пулсассăн, пурин те хамăр ачасемпе ĕмĕр-ĕмĕр савăнса пурăнмалла пултăр. Çапла пултăр тесе вĕсене çемьерех ыр кăмăла мала хума хăнăхтарса ÿстерер.

**– Мĕнле паллă тăваççĕ районта Пĕтĕм тĕнчери çемье кунне?**

– Иртнĕ эрне кун район администрацийĕн ырă йăласен залĕнче çемье пĕлтерĕшĕ пирки çавра сĕтел хушшинче калаçу пулчĕ. Унта ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, нумай ачаллă çемьесене, ют çын ачисене хăйсен хÿттине илнисене чĕнтĕмĕр. Мероприяти питĕ интереслĕ пулчĕ. Кун пирки çитес номерсенчен пĕринче уйрăм калаçу пулĕ-ха. Çакнашкал мероприятисем кашни ял тăрăхĕнчех пулаççĕ.

**– Тавах, Алевтина Евстафьевна, калаçушăн.**

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**